Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады школьников
общеобразовательных организаций с изучением чувашского языка
2017-2018 учебный год. 11 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 120 минут

Текста вулăр, хушнă ĕçсене тăвăр.

(1)Хĕвел çÿлтен çÿле хăпарса пырать. (2)Çурхи тĕнче вăранса çитет. (3)Вĕт-шакăр кайăксем хăйсен кулленхи ĕçĕсене пикенсех тума тытăнчĕç: пĕрисем йăва çавăраççĕ, теприсем апат-çимĕç шыраççĕ. (4)Кунсерен ăшăтса пынине кăмăлласа юрлакансем те темĕн чухлех. (5)Сунар кайăкĕсемшĕн çеç канăç çук: вĕсене пăшаллă çынсем те, кăвак тÿпере ярăнакан ăмăрт кайăксемпе кăйкăрсем те, çĕр çумĕпе вĕçсе çÿрекен хурчкасем те тытса çиесшĕн. (6)Йăх ĕрчетесшĕн çунакан кайăк хурсем, кайăк кăвакалсем кашни кунах пинĕ-пинĕпе çăткăн кайăксен качине çакланаççĕ е пăшаллă çынсен хутаçне кĕрсе ÿкеççĕ. (7)Чĕррĕн юлнисенчен те нумайăшĕ нисĕпсĕр тăшмансене пула чĕп кăлараймасăр юлать…

(8)Çирĕм икĕ хур кайăк, çутă шыв вырăнне хура тăхлан сирпĕнтерсе «саламланă» Çавалтан пăрăнса, пĕр ăстрăм ыраш калчиллĕ симĕс уйсем çийĕн вĕçрĕ. (9)Хыçала çырма хĕррисемпе ларса тухнă чăваш ялĕсем, хĕвел çутипе йăлтăртатакан пĕвесемпе кÿлĕсем сапаланса юлчĕç. (10)Хытă ывăнса çитнĕ кайăк хурсем куç кĕски пек çутă шыв-шурпа тикĕс улăхсем çине ытарайми савса пăхаççĕ. (11)Пур çĕртре те çынсем курăннăран вĕсем çĕре анма хăяймарĕç. (12)Пăшăрханнă пек какаласа, тÿп-тÿрĕ картана унтан та кунтан авкаласа, вĕсем малтан малалла вĕçеççĕ те вĕçеççĕ…

1. Текстран кайăк ячĕсене çырса илĕр, вĕсене вырăсла куçарăр.
2. 7-мĕш предложенири *нисĕпсĕр* сăмах пĕлтерĕшне палăртăр, вырăсла куçарăр.
3. Текстра гидроним тупăр та ăна вырăсла куçарăр.
4. Текстран евĕрлев сăмахĕсенчен пулнă глаголсене тупăр
5. Ваттисен сăмахĕсене пĕтмĕшне тупса çырăр.

Кайăк хитре тĕкĕпе, …. Кайăка – пĕрчĕпе, этеме – …. Куракăн пĕр юрă, ухмахăн … Куç хăрать те, ….Вăрман пек пуянни çук, уй пек ….

6. Кто из чувашских поэтов провел в лагерях и ссылке 17 лет? В чем проявился его литературный талант?

7. Соотнесите приведенные ниже определения с понятиями *сатира, гротеск, юмор, сарказм, эпиграмма.*

1. Один из видов сатирического изобличения, язвительная насмешка, высшая степень иронии, основанная не только на усиленном контрасте подразумеваемого и выражаемого, но и на немедленном намеренном обнажении подразумеваемого.

2. Вид комического, наиболее беспощадно осмеивающий несовершенство мира, человеческие пороки.

3. Художественный прием намеренного искажения чего-либо, нарушение пропорций изображаемого мира, причудливое соединение фантастики с жизнеподобием.

4. Наиболее жизнеутверждающий, особый вид комического, когда серьезное описывается с усмешкой, а в малом, незначительном видится важное и глубокое.

5. Короткое сатирическое стихотворение, которое высмеивает чьи-либо пороки.

8. Кому из персонажей повести А. Артемьева «Не гнись, орешник!» принадлежат данные приметы?

Из-под ушанки выбились крутые завитки волос. Лицо разрумянилось, а в черных глазах отражается огонь. Ресницы – как крылья ласточки, вот-вот взмахнет ими и улетит…

9. Как можно расшифровать имя главного героя поэмы «Нарспи»?

10. Напишите синквейн со словом э*кологи* (на чувашском языке).